ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

8 (857) №, 2016, пуш/март, 3 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/пуш уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧАÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 14-17 |
| Купăста | 18-20 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 30-35 |
| Ыхра | 200-250 |
| Хăяр | 80-150 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 80-150 |
| Пылак пăрăç | 120-250 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 55-120 |
| Иçĕм çырли | 75-130 |
| Апельсин | 75-100 |
| Лимон | 110-140 |
| Банан | 55-65 |
| Мандарин | 80-120 |
| Груша | 80-150 |
| Гранат | 120-180 |
| Хурма | 65-90 |
| Сырлан /облепиха/ | 200 |
| Кĕтмел çырли | 160 |
| Шур çырли | 150 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 64-66 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 58-62 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 50-52 |
| Пыл | 350-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-380 |
| Сысна ашĕ | 200-380 |
| Сурăх ашĕ | 180-300 |
| Пĕвер | 120-180 |
| Чăх | 250-300 |
| Кăвакал | 350-400 |
| Кăркка | 350-400 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-72 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 180 |
| Мойва | 160-180 |
| Минтай | 150 |
| Горбуша | 280 |
| Шăла пулă /судак/ | 280 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 230 |
| Çăрттан | 170 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 30-35 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 220 |



## Çуркунне хушма апат кирлех

Реклама

**Тĕнчипех сарăлнă «бакалея» сăмах авал араб чĕлхинче «техĕмлĕхсемпе сутă тăвакан» пĕлтерĕшлĕ пулнăмĕн. Туркăлла «бокала» та çав кăкранах, типĕтнĕ, хатĕр апат-çимĕçе пăхкала та ил текен пĕлтерĕшлĕ иккен. Чăвашла каланă тейĕн – халиччен пĕлменччĕ...**

Шупашкар районĕнчи хула çывăхĕнчех вырнаçнă Çатракасси ялĕнче тĕпленнĕ «Бакалея» Суту-илӳ çурчĕн пай пуçлăхĕпе **Павел Николаевич ЧЕРНОВПА** бакалея пирки калаçрăмăр.

– Бакалея таварĕсен ассортименчĕ пуян пирĕн. Çын куллен апат-çимĕç хатĕрлеме усă куракан тĕрлĕрен çăнăх-кĕрпе, сахăр, тăвар, макарон изделийĕсем, тип çу т.ыт.те.

**– Тавара халăх патне мĕнле çитеретĕр?**

– Телефонпа шăнкăравласа хăйсене мĕн кирлине саккас параççĕ. Республикипех, кашни районах кунсеренех машина чупать. Саккассем нумай. Паллах, пĕр-икĕ михĕ çăнăхшăн е ирĕшшĕн района машина яма тăкаклă. Çавăнпа çынсене виççĕн-тăваттăн пуçтарăнса саккас тăратма сĕнетпĕр. 6-10 михĕлĕх пулсан яла çитерсех паратпăр. **Пирĕн телефонсем: 8-917-667-33-51 тата 8(8352) 32-07-37.** Пирĕнпе тӳрремĕн çыхăнса туянни халăхшăн перекетлĕ. Тавар пахалăхĕ аван. Пирĕн хаксем, тĕрĕссипе, пурне те килĕшеççĕ. Акă, танлаштарса пăхар-ха «Кил-çурт, хушма хуçалăхра» пичетленекен Шупашкар пасарĕнчи хаксемпе. Самаях йӳнĕ. Пĕр **килограмм хуратул пасарта 62 тенкĕ пулсан, пирĕн патра 51 тенкĕпе туянма пулать. Татах илсе кăтартăпăр: вир кĕрпи пасарта 35 тенкĕ, пирĕн – 19, сахăр песукĕ пирĕн – 44, тулă çăнăхĕ – 19, пăри (полба) – 48 тенкĕ тăрать. Рис – 39 тенкĕрен пуçласа, сортлăхне кура хаклăрах йышшисем пур.**

**– Выльăх-чĕрлĕх валли те пуррине куратăп.**

– Килте тытакан пур выльăх валли те тĕрлĕрен комбикорм пур. Ĕне-пăру, чăх-чĕп, сурăх-качака, кролик, кăркка, хур-кăвакал валли ятарласа уйрăмшарăн хатĕрленисем те пур. Комбикорм та пирĕнпе тӳрремĕн çыхăнса туянсан лавккаринчен чылай йӳнĕрех. Халăхшăн çакă самаях перекетлĕ. Çăва тухиччен пайтах-ха вăхăт. Ĕне-пăрушкана утă-улăмсăр пуçне хушма апат кирлех. Çуркуннепе этем çеç мар, выльăх-чĕрлĕх те витаминсем, кирлĕ минералсем сахалланнипе аптăрать. Комбикорма выльăхăн тулли рационне тĕпе хурса хатĕрлеççĕ. Тĕрĕс апатлантарни ĕне сăвăмне ӳстерме, пăрушкана сывă та хăвăрт ӳсме пулăшать.

**– Павел, эсĕ чăваш каччи, ялта выльăх-чĕрлĕх пур-и сирĕн?**

– Вăрмар районĕнчен эпĕ. Ялта атте-анне выльăх йышлă тытать. Яла кирлĕ таварпа тивĕçтерсе тăраканни паллах эпĕ. Халĕ чăхсем çăмарта тума пуçланă, хур-кăвакал та кĕçех çăмарта тума тытăнĕ. Çак вăхăтра вĕсене паха апат кирлĕ. Чăх чĕпписем тухсан малтанхи вăхăтра «Пресс-старт» хутăшпа, унтан «Старт» текеннипе, каярах «Рост» хутăшпа тăрантарсан аван. Çакă чĕпĕсене лайăх аталанма май парать.

Сыснашăн, кайăк-кĕшĕкшĕн комбикорм, ирĕш /отруби/ тĕп апат шутланать. Ăна выльăха типĕлле е шывпа хутăштарса, е вĕри шывпа пăшăхласа /кăштах пĕçерсе/ пама юрать. Çакă выльăха мĕнле апата хăнăхтарниннчен çеç килет темелле.

**– Сирĕн яланхи клиентсем те пур ĕнтĕ, курттăммăн туянакансем.**

– Ял хуçалăх предприятийĕсене, фермерсене, чăхчĕп фабрикисене комбикормпа тивĕçтеретпĕр. Уйрăммăн сутăн тăвакансем те пирĕнтен илеççĕ. Вĕсем курттăммăн туянаççĕ. Ытларах ял халăхĕпе ĕçлетпĕр. Çынсем апат-çимĕç таварне нумай туянаççĕ. Выльăх валли те 5-6 михĕ тĕрлĕрен комбикорм кирлех. Киле валли мĕн кирлине пăхса тухса тĕрлĕ тавара пĕр саккаспа йĕркелени туянаканшăн перектелĕ пулĕ.

**– Мĕнле комбикорм лайăхрах, кĕрпелли е гранулălли?**

– Уйрăмлăх çук тейĕттĕм. Чи кирли – апат хутăшĕн пахалăхĕ. Вăл патшалăх стандарчĕсене тивĕçтермелле. Пирĕн пахалăх сертификачĕ кашни тавар тĕсĕ валлиех пур.

Комбикорм тĕсĕпе, шăршипе аван пулмалла. Авăртман пĕрчĕсем пулмалла мар. Сăмах май, авăртман тулă, урпа туянакансем те пур. Выльăхшăн усăллă пултăр тесен урпана авăртса памалла.

**Пĕтĕмлетсе çапла калас килет: паха апатпа тăрантарни выльăх-чĕрлĕхе лайăх аталанма, унран паха продукци илме май парать. Пирĕн ĕç-хĕл апатçимĕçпе, выльăх-чĕрлĕх апачĕпе çыхăннă. Эпир халăхшăн ĕçлетпĕр, пĕтĕм продукцие курттăммăн туянмалли (оптовăй) йӳнĕ хакпа сутатпăр. Халĕ телефон çыхăнăвĕ вăйлă аталаннă – республикăри чи аякри ялсем те чиперех шăнкăравлама пултараççĕ. Эпир сирĕн пата çитме яланах хапăл.**

**Эльвира ИВАНОВА** калаçнă.

## Халăх сăнанинчен

■ *Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче тумла вăйлă тумласан çуркунне ир килет. Уяр çанталăк пулсан çулла хăяр лайăх пулĕ. Çак кун çанталăк мĕнле – çулла çапла килĕ.*

■ *Пуш уйăхĕнче çумăр çусан çулталăк кăмпаллă пулать.*

■ *Пуш уйăхĕнче аслати авăтсан çуркунне сивĕ вăрах тăрать.*

■ *Пуш уйăхĕнче çăра тĕтре чылай тăрать – çулла йĕпесапаллă пулĕ.*

■ *Çывăрнă чухне кушак сăмсине урисемпе хуплать – çанталăк сивĕтет.*

■ *Çиллĕ çанталăкра пĕлĕтсем çиле хирĕç шăваççĕ – кĕçех юр çăвать.*

## Ремонтантлă хурăн çырли

Ремонтантлă хурăн çырли çу тăршшĕпех чечекре, çимĕç парать. Нумай сортăн çырлисем хĕрлĕ, çутă-сарă тĕслĕ пулаканнисем те пур. Ремонтантлă хурăн çырлине вăрăран ĕрчетеççĕ.

Мартăн пĕрремĕш çурри – вăрлăх акмалли чи лайăх вăхăт. Ăна валли çĕрĕк тăпри, торфпа хăйăр хутăшĕ /2:1:1/ илсе çĕр хатĕрлемелле, лайăх кăпкалатмалла. Акнă хыççăн ещĕке кантăкпа хупламалла. Вăрлăха шăтса тухма 18-22 градус ăшă кирлĕ. Пĕрремĕш парка çулçи йĕркеленсен калчасене куçара-куçара лартмалла, вĕсен хушши 2 сантиметртан кая пулмалла мар. Тымар вĕçне кăштах татса илмелле, капла тымар тытăмĕ çирĕпрех пулать. 4-6 çулçă çитĕнсен хурăн çырлине теплицăна е усă тӳпе айне малтанах хатĕрленĕ йăрансем çине кăларса лартмалла.



**«Кил-çурт, хушма хуçалăх»** хаçата 2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен **203,70** тенкĕпе çырăнтараççĕ.

## Вулакансем ыйтнипе

# «Уйăх тăхри» мĕне пĕлтерет?

**Хаçатра çанталăк пирки çырнинче «уйăх тăхри» тени пур. Мĕне пĕлтерет вăл?**

**Юля.**
Елчĕк районĕ.

«Уйăх тăхри» тени тӳпери уйăхăн тăрăмĕпе çыхăннине ăнкаратăр. Ĕнтĕ вулакансем. Чылайăшĕ вăл мĕне пĕлтернине те ăнланать-тĕр.

Этем сĕм авалтанах уйăха темĕнле асамлă вăйпа çыхăннă тесе шухăшланă. Ара, уйăх пĕрре тулать, тепре катăлса пырать, унтан пачах çухалать те каллех чĕрĕлсе ӳсме пуçлать. Эпир халĕ те уйăх календарьне пăхăнса йывăç-курăк акатпăр-лартатпăр, ытти пахча ĕçĕсене пурнăçлатпăр. Çĕнĕ ĕçе пуçланă чухне те уйăх мĕнлине шута илеççĕ.

Уйăхăн пĕр тулли çаври /цикл/ 29,5 кунпа танлашать. Çĕнĕ уйăх пуçлансанах малтанхи кунах ахаль куçпа курăнмасть те – ытла çинçе, унтан унăн çурли курăнма пуçлать. Çурла мăнтăрланса пырса 8-9-мĕш кунсен тĕлнелле çурма çавра пулса тăрать. Ку – уйăх чĕрĕкĕ, уйăх тăхри теççĕ ăна. Тепĕр чĕрĕкрен уйăх тулса çитет, унтан катăлма пуçлать. Катăлнăçемĕн тепĕр 8-9 кунран вăл каллех çурри çеç юлать. Ку – кивĕ уйăхăн тăхри.

Кивĕ е çĕнĕ уйăх иккенне уйăх календарьне пăхмасăрах уйăрма çăмăл. Пирĕн тăрăхра çĕнĕ уйăх каçхине курăнать, унăн çурли çапçавракан авăнать. Катăлакан уйăхăн çурли тепĕр еннелле авăнчăк, вăл ирхине те курăнать. Кивĕ уйăхăн çурлине куçпа тăсса çавăрсан тăсмакрах, сарлакарах çавра пулать.

Уйăха 4 тата 8 чĕрĕке /фазăна/ пайлаççĕ. Чăвашсем, каларăмăр, 4 чĕрĕке пайланă ĕлĕкренех. 1-мĕш чĕрĕк – çĕнĕ уйăх, 2-мĕш чĕрĕк – уйăх тăхринчен пуçласа тулса çитиччен, 3-мĕш чĕрĕк – катăлса çурри юличчен /кив уйăх тăхри/, 4 -мĕш чĕрĕк – катăлса /кивелсе/ курăнми пуличчен.

Апла-и, капла-и, уйăхĕ вара пĕр чарăнми «ĕçлет». Вăл уйăх тăхринче те, тăп-тулли чухне те пĕр самант та тытăнса тăмасть. Тулса çитет те тӳрех катăлма пуçлать, вĕççĕр-хĕрсĕр.

# Кирлĕ пулĕ

Килти хуçалăхра эпир пурте пĕлекен эрехпе /водка/ тĕрлĕрен усă курма пулать. Тĕслĕхрен:

- Чечек çыххи чылай вăхăт илемлĕ лартăр тесен вазăна пĕр литр шыва пĕр апат кашăкĕ эрех, пĕр чей кашăкĕ сахăр песукĕ ярса ирĕлтермелле.
- Эрех скотчпа, лейкопластырьпе çыпăçтарнă тĕлсене лайăх тасатать. Мамăка эрехпе йĕпетсе вараланчăк тĕлсене сăтăрмалла çеç.
- Кантăка çунă чухне пĕр литр шыва çур стакан эрех ярăр. Кантăк лайăх тасалать, йăлтăртатса тăракан пулать.
- Шыв кранĕ е ытти хромланă япала тĕссĕрленсен эрехпе йĕпетнĕ татăкпа сăтăрмалла. Çĕнĕ пекех йăлтăртатакан пулĕç.
- Тепĕр чухне тумтире çума май килмест. Ăна усăлтарма эрехпе пĕрĕхĕр те усă сывлăша çакса хурăр.
- Тутăхнă болта кăлармалла, анчах вăл пачах та хускалмастьтĕк унта эрех темисе тумлам ярăр, кăштахран болта пăрса пăхăр, çемçелме кирлĕ.

### Хаклă хĕрарăмсем, çуркуннехи чи илемлĕ уяв – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ – ячĕпе ăшă салам йышăнсамăр!




Çак праçник тĕнчене савăнăçпа çутă кӳрет, мĕншĕн тесен ăна сире – ырă, ăслă, ăшă кăмăллă, черчен, тимлĕ хĕрарăмсене – халалланă. Чи асамли тата чи хакли пĕтĕмпех сирĕнпе çыхăннă: пурнăç çурални, кил вучахĕн ăшши, пире çуралнăранпах тата пурнăç тăршшĕпех пархатарлă пулма хавхалантаракан, пурнăçа пĕлтерĕшлĕ тăвакан, инкек-синкекрен хӳтĕлекен тата телейĕн илĕртӳллĕ саманчĕсене пĕр хĕрхенмесĕр парнелекен юрату.

Граждансен хушшинчи çураçу тата обществăри килĕшӳ те хĕрарăмсен черчен хулпуççийĕсем çинче тытăнса тăраççĕ – çакна асра тытмалла. Шăпах савăнпа Раççейĕн патшалăх политики паян çемье хаклăхĕсен сумне ӳстерес, ача амăшĕпе ачалăхăн социаллă хӳтлĕхне çирĕплетес тĕллевлĕ.

Хаклă хĕрарăмсем, сире ырлăхшăн, чун-чĕре ăшшишĕн, тĕнчене килĕшӳллĕрех, хăтлăрах тата савăнăçлăрах тума пĕлнĕшĕн пысăк тав. Сирĕн пурнăçăрта хĕрарăмăн илĕртӳллĕ пахалăхĕсене, ачашлăхпа ырлăха, палăртмалли самантсем – ытларах, çирĕплĕхпе тата тӳсĕмлĕхпе усă курмаллисем вара сахалрах пулччăр. Сирĕн пурнăç юратупа тулли пултăр, сутă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр, кашни кун асамлăх парнелетĕр. Телейлĕ пулăр!

**Раççей Федерацийĕн VII суйлаври Патшалăх Думин суйлавĕн малтанхи сасăлавне хутшăнакан Ильяс КАЛМЫКОВ.**

*Пĕттерĕ*

## Чечекçĕ валли

# Пĕр çул ӳсекен чечексем

**Кил умĕнче чылайăшĕ чечек ӳстерме кăмăллать. Çуркуннехи нарцисс, гиацинт, тюльпан çеçке çурса тăкăннă хыççăн ириссем илемĕпе савăнтараççĕ, унтан – капăр пионсем. Асăннă чечексем йăлтах темиçе çул ӳсекеннисем. Пĕр çул ӳсекен чечексем пирки кăштах калаçар-ха.**

Хăшпĕр ӳсен-тăран тимлĕхе юратать. Вĕсене пăхма ăсталăх кирлĕ. Илсе кăтартнă тĕслĕхсем ытлашши юнтармăшскерсем мар. Вĕсене пăхма çăмăл, вăрах чечекленеççĕ.



**Лаватера** – шурă, кĕрен, хĕрлĕ тĕссемпе çиçекен шăнкăрав евĕрлĕ çеçкесем кашни пахчанах илем кӳреççĕ. Вăрă акса ӳссессĕн икĕ уйăхран чечекленме тытăнаççĕ те кĕркуннеччен илемĕпе савăнтараççĕ. Лаватера вăррине кĕркунне сапса хăварать, тепĕр çулхине шăтса тухать. Унăн вăрлăхне пуçтарса илсе çуркунне урăх çĕре акма меллĕ.



**Годеция** – тĕрлĕ тĕспе çиçекен илемлĕ чечексем кирек кам кӳçне тыткăнлаççĕ. Годеци – çӳлли те, лутри те пулать. Лутра туналлине суйламалла: шалча çумне çыхса çирĕплетме тивмĕ. Тăпрана аксассăн е калчапа лартнă хыççăн уйăх çурăран илемĕпе тыткăнлать. Хумлă-хумлине, тĕрлĕ тĕслине суйлама сĕнетпĕр.



**Космея** – ялсенче тахçантанпах акаççĕ. Тахçанхи сортсем йăлтах çӳллĕ пулнă-тăк халĕ çур метра яхăн çеç çитĕнекен сортсем те пур. Унччехи сортсенчен япшартарах та хаваслăрах курăнаççĕ чечексемпе йăвă хупăрланнăскерсем.

**Акроклинум** /гелиптерум/ – калчалантармасăрах тăпрана акма юрать. Вăрах чечекленет. Акроклинум – «типĕ» чечек. Ăна типĕтсе çыхăсем тума аван. Типĕтнĕ чечек çыххи тумашкăн лайăх çурăлнă чечеке татмалла та тĕттĕм, типĕ çĕре кутăн çакса хумалла. 2-3 эрнерен чечек типсе çитет. Тĕрлĕ композицисем тума, чечек çыххисем хатĕрлеме питĕ аван.



Пĕр çул ӳсекен чечексем вăрах вăхăт чечекленсе пахчаçăна киленĕç кӳреççĕ. Нумай çул ӳсекеннисем вăрах чечекленмеççĕ.

Кашни ӳсен-тăранăн аталанса çеçкеленес вăхăчĕ тĕрлĕрен. Вăраххăн аталанаканнисене калчаран лартсан аванрах. Хăшпĕр чечеке пуш уйăхĕн пуçламăшĕнчех акмалла. Халĕ акмалли чечексем çаксем: вăрах чечекленекен бегони, виола /анютины глазки/, гербера, петуни, герань, агератум, примула, ырă шăршăллă табак, годеци, сальви.

Ака-çу уйăхĕсенче хăвăрт çитĕнсе чечекленекеннисене акаççĕ: бархатцы, цини, флокс. Ку йышшисене тӳрех тăпрана акма юрать. Калчаран лартсассăн, паллах, хăвăртрах чечекленме пуçлĕç.

# Картлашка меллĕ-и?



Кирек мĕнле картлашка тăвас тесен те – тӳрĕ е авăнчăк, йывăçран е тимĕртен, пӳртре е пӳрт тулашĕнче – чи кирли ăна йĕркене пĕлсе, тĕрĕс виçепе ăсталамалла. Картлашка меллĕ пулсан унпа хăпарма-анма та çăмăл.

Сĕвеклĕх 14 градусран ытларах пулсан картлашка тумалла. Сĕвеклĕх пĕчĕкрех пулсан утма çул çуммипе алăпа тытăнса улăхмашкăн карлăк туни те çителĕклĕ. 4 картлаçран ытларах картлашка тумалла пулсан юнашар карлăк пулмалла. Пĕр ярăмра /лестничный марш/ 20-рен ытла пусмаллă картлашка пулни те илемсĕр. Пусмасен шучĕ 9-14 пулмалла. Пӳртри картлашкана ытлашши сарлака тума кирлĕ мар. Стройматериала тата усăллă лаптăка пĕтерни çеç.

Иккĕмĕш хута хăпармалли пӳртри картлашка сарлакăшĕ вăтамран пĕр метр пулмалла. Ун çуммипе икĕ енчен карлăк /перила/ çирĕплетмелле. Картлашкан пĕр енĕ стена хĕррипе пырать-тĕк çав енне карлăк тумасан та юрать. Карлăк çӳллĕшĕ 0,9 м, хӳтлĕх туйăисен /балясины/ хушши 15 см пулмалла. Килте пĕчĕк ачасем пулсан хӳтлĕх туясен хушшине 10 см çеç хăвармалла. Картлашкапа карлăка çирĕп материалтан, лайăх тытăнтарса тумалла. Картлашка выртакан материал вара уйрăмах çирĕп кирлĕ.

Çурта ăшăтмалли приборсем çумĕнче е яланах нӳрĕк тăракан вырăнта йывăç картлашка туни вырăнсăр. Нӳрĕкпе те, вĕрипе те йывăç хăвăрт пĕтет. Вĕри çĕрте йывăç хĕрушлăх каларса тăратать.

Картлашкан пусмисене çак виçесемпе тăваççĕ: пусма анлăшĕ 27-30 см, икĕ пусма хушши – 15-18 см. Ытлашши çӳллĕ пусмасемпе картлашка чăнкă пулать – хăпарма йывăр.

Пӳртри картлашка айĕнчи вырăна усă курма пулать. Стена çумĕпе иртекен картлашка айĕнче гардероб е кĕнеке шкапĕ, кладовка ăсталаççĕ. Картлашка хăйнеевĕрлĕ тата усăллă пулса тăрĕ.

# Çанталăк

| Дата | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 03.03 | + 1 | + 1 | |
| 04.03 | + 2 | + 1 | |
| 05.03 | + 1 | – 1 | |
| 06.03 | + 1 | + 1 | |
| 07.03 | + 2 | – 1 | |
| 08.03 | + 1 | – 2 | |
| 09.03 | + 1 | – 6 | |

| | Кун тăршшĕ | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 03.03 | 10.54 | 24 у.к. |
| 04.03 | 10.59 | 25 у.к. |
| 05.03 | 11.04 | 26 у.к. |
| 06.03 | 11.08 | 27 у.к. |
| 07.03 | 11.13 | 28 у.к. |
| 08.03 | 11.18 | 29 у.к. |
| 09.03 | 11.23 | Çĕнĕ уйăх |

Кун тăршшĕ 11 сехет те 23 минут, 4 сехет те 33 минут вăрăмланать. Уйăх катăлса пырать.

2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн «Хыпар» издательство çурчĕн кăларăмĕсене март уйăхĕн 31-мĕшĕччен пĕлтĕрхи хаксемпе çырăнтараççĕ




ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ:
«Хыпар» – 776,94 тенкĕ
«Хыпар-эрнекун» – 355,38 тенкĕ

«Чăваш пичечĕ» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче:
«Хыпар» – 228 тенкĕ
«Хыпар-эрнекун» – 150 тенкĕ

Редакцире:
«Хыпар» – 144 тенкĕ
«Хыпар-эрнекун»– 90 тенкĕ

☎ 56-15-30, 56-00-67

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

пуш, 7-13

## 7 тунтикун

### 1 КАНАЛ
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ФИКТИВНЫЙ БРАК» 16+
7.30 Х/ф «СОЛОМЕННАЯ ШЛЯПКА» 16+
10.10 Т/с «МАНЕКЕНЩИЦА» 16+
12.15 «Манекенщица» 16+
14.40 «Кристиан Лубутен. На высоких каблуках» 12+
15.45 К 75-летию Андрея Миронова. «Я блесну непрошеной слезой...» 12+
16.50 «ДОстояние РЕспублики: Андрей Миронов»
18.40 Х/ф «КРАСОТКА» 16+
21.00 «Время»
21.20 Х/ф «СТАТУС: СВОБОДЕН» 16+
23.10 Концерт Данилы Козловского «Большая мечта обыкновенного человека»
0.40 Х/ф «У КАЖДОГО СВОЯ ЛОЖЬ» 16+
2.05 Х/ф «РУКОВОДСТВО ДЛЯ ЖЕНАТЫХ» 12+
3.50 «Модный приговор»
4.50 «Наедине со всеми» 16+

### РОССИЯ 1
5.15 Х/ф «ДЕВУШКА С ГИТАРОЙ» 16+
7.05, 14.20 Т/с «КАТЕРИНА» 12+
14.00, 20.00 Вести
15.00 «Петросян и женщины» 16+
17.30 «Танцы со Звездами» Сезон-2016
20.30 Х/ф «МОСКВА СЛЕЗАМ НЕ ВЕРИТ» 16+
23.40 К 75-летию. «Андрей Миронов. Держась за облака» 12+
0.35 Х/ф «СОЛОМЕННАЯ ШЛЯПКА» 16+
3.25 Х/ф «СВАТОВСТВО ГУСАРА» 16+
4.55 Комната смеха

### НТВ
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 Х/ф «СИБИРЯК» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15, 10.20 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
12.00 «Технология бессмертия» Научное расследование Сергея Малоземова 16+
13.20 «Поедем, поедим!»
14.10 Х/ф «Я - АНГИНА!» 16+
18.00 «Говорим и показываем» Спецвыпуск к 75-летию со дня рождения Андрея Миронова 16+
19.20 Т/с «ВДОВА» 16+
23.35 Х/ф «МОЙ ДРУГ ИВАН ЛАПШИН» 12+
1.35 «Дачный ответ» 0+
2.35 Главная дорога 16+
3.15 Т/с «КОНТОРА» 16+

### ТНТ
7.00 М/ф «Даффи Дак: Охотники за чудовищами» 12+
8.35 «Комеди клаб» 16+
9.00, 9.30 Т/с «САШАТАНЯ» 16+
10.00 «Дом-2. Lite» 16+
11.00, 12.00, 13.00, 14.00 «Comedy Woman» 16+
15.00, 15.50, 16.25, 16.55, 19.30 Т/с «ОСТРОВ» 16+
17.30 Т/с «ОСТРОВ» «БЕЗ ПАНИКИ» 16+
18.00 Т/с «ОСТРОВ» «ПЕРВЫЙ ПОЦЕЛУЙ» 16+
18.30 Т/с «ОСТРОВ» «СЕКРЕТ НЕ СЕКРЕТ» 16+
19.00 Т/с «ОСТРОВ» «ДЕНЬ РОЖДЕНИЯ ЛЕШИ» 16+
20.00 Т/с «ОСТРОВ» «ШАР» 16+
20.35 Т/с «ОСТРОВ» «ПОХОРОНЫ ЛЕШИ» 16+
21.05 Т/с «ОСТРОВ» «ВЗРОСЛАЯ ЖИЗНЬ» 16+
21.40 Т/с «ОСТРОВ» «В МОСКВУ! В МОСКВУ!» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Жемчужина Поволжья**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 Микрофон умĕнче – театр. Анне ăшши,1 пайĕ**

* * *

**18.10-19.00 Микрофон умĕнче – театр. Анне ăшши, 2 пайĕ**

## 8 ытларикун

### 1 КАНАЛ
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «МОЯ ЛЮБОВЬ» 12+
6.45 Х/ф «ОРЕЛ И РЕШКА» 12+
8.20 Х/ф «ОДИНОКАЯ ЖЕНЩИНА ЖЕЛАЕТ ПОЗНАКОМИТЬСЯ» 16+
10.10 Х/ф «ПРИХОДИТЕ ЗАВТРА...» 16+
12.20 Х/ф «ВЫСОТА» 16+
14.10 Х/ф «ДЕВЧАТА» 16+
16.10 Кино в цвете. «Весна на Заречной улице» 16+
18.00 Х/ф «ЛЮБОВЬ И ГОЛУБИ» 12+
20.00, 21.20 Юбилейный вечер Раймонда Паулса
21.00 «Время»
23.00 Х/ф «ОДНА ВСТРЕЧА» 16+
0.30 Х/ф «В ОЖИДАНИИ ВЫДОХА» 16+
2.45 «Модный приговор»
3.45 «Наедине со всеми» 16+

### РОССИЯ 1
6.10 Х/ф «ОДИНОКИМ ПРЕДОСТАВЛЯЕТСЯ ОБЩЕЖИТИЕ» 16+
7.55 Х/ф «ЛЮБОВЬ С ИСПЫТАТЕЛЬНЫМ СРОКОМ» 12+
12.00 «О чем поют мужчины» 12+
14.00, 20.00 Вести
14.20 Х/ф «МОСКВА СЛЕЗАМ НЕ ВЕРИТ» 16+
17.30 «Танцы со Звездами» Сезон - 2016
20.30 Х/ф «ДНЕВНИК СВЕКРОВИ» 12+
23.25 Праздничное шоу Валентина Юдашкина
1.40 Х/ф «ЛЮБЛЮ 9 МАРТА!» 12+
3.25 Комната смеха

### НТВ
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 Х/ф «МОЙ ДРУГ ИВАН ЛАПШИН» 12+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15, 10.20 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
12.00 «Еда живая и мертвая» Научное расследование Сергея Малоземова 12+
13.20 Х/ф «ТРИ ТОПОЛЯ НА ПЛЮЩИХЕ» 16+
15.00 «Зеркало для героя» Гала-шоу с Оксаной Пушкиной 12+
18.00 «Все звезды для любимой» Праздничный концерт 12+
19.20 «Все звезды для любимой» Праздничный концерт (продолжение) 12+
20.00 Т/с «ВДОВА» 16+
0.25 «Дискотека 80-х» 12+
4.00 Т/с «КОНТОРА» 16+

### ТНТ
7.00 М/ф «Мухнем на Луну» 12+
8.40 «Комеди клаб» 16+
9.00, 9.30 Т/с «САШАТАНЯ» 16+
10.00 «Дом-2. Lite» 16+
11.00, 11.30, 12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30, 20.00, 20.30, 21.00, 21.30, 22.05, 22.35 Т/с «ИНТЕРНЫ» 16+
23.05 «Дом-2. Город любви» 16+
0.05 «Дом-2. После заката» 16+
1.05 Х/ф «НИМФОМАНКА: ТОМ ВТОРОЙ» 18+
3.20 Х/ф «НИКИТА-3» «ПОКА СМЕРТЬ НЕ РАЗЛУЧИТ НАС» 16+
4.10 Х/ф «ПРИГОРОД-2» «ЕШЬ, МОЛИСЬ, ЕШЬ» 16+
4.40 Т/с «СТРЕЛА-3» «ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
5.30 Т/с «КЛИНОК ВЕДЬМ» 16+
6.20 Х/ф «ЖЕНСКАЯ ЛИГА: ПАРНИ, ДЕНЬГИ И ЛЮБОВЬ» 16+
СЛЕДСТВИЯ» 16+
5.05 Х/ф «ПРИГОРОД-2» «ПОРОЛОНОВЫЙ ПАЛЕЦ» 16+
5.30 Т/с «СТРЕЛА-3» «КОРТО МАЛЬТЕЗЕ» 16+
6.20 Х/ф «ЖЕНСКАЯ ЛИГА» 16+

## 9 юнкун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 12.15 Х/ф «ЛЮБОВЬ И ГОЛУБИ» 12+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.30, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.35 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «БАТАЛЬОН» 12+
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Политика» 16+
3.20 «Модный приговор»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Х/ф «ДНЕВНИК СВЕКРОВИ» 12+
23.50 Специальный корреспондент 16+
1.35 Ночная смена. «Загадки цивилизации. Русская версия» «Гиперборея. Потерянный рай» «Новая прародина славян»
3.35 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
15.00 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
21.35, 22.55 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
22.30 «Итоги дня»
0.55 «Место встречи» 16+
1.55 «Следствие ведут...» 16+
2.50 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Будьте здоровы**
**6.24 Анонс передач**
**6.27 Журналистсем-ентешсем**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Мозаика**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27 Права потребителя**
**7.34 История в лицах**
**7.48-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Вăхăт çитрĕ. Тӳрĕ эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Чĕрĕ шыв**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 10 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.20 «Модный приговор»
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.25, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.30 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «БАТАЛЬОН» 12+
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Минин и Гафт» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Х/ф «ДНЕВНИК СВЕКРОВИ» 12+
22.55 «Поединок» 12+
0.40 Ночная смена. «Загадки цивилизации. Русская версия» «Охотники за каменным лосем» «Тайный код амурских ликов»
2.40 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Военное детство. Премьера (на чувашском языке)**
**9.15 Депутат на связи**
**9.20 Личные деньги**
**9.30-9.55 Я люблю Чувашию. Ядринский район. Премьера**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
15.00 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
21.35, 22.55 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
22.30 «Итоги дня»
0.55 «Место встречи» 16+
1.55 Квартирный вопрос 0+
2.55 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Спорт площадки**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 11 эрнекун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20, 5.05 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 4.05 «Модный приговор»
12.15 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 Х/ф «БОЛЬШОЙ ВАВИЛОН» 16+
1.45 Х/ф «СВАДЬБА» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 «Петросян-шоу» 16+
23.00 Х/ф «МЕТЕЛЬ» 12+
2.50 «Заговор против женщин» 12+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 «Как неразгаданная тайна...» Премьера**
**9.20 Из нашего фонда. В лучах трех солнц. Видеофильм**
**9.45-9.55 ФинГрамота**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
15.00 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 «ЧП. Расследование» 16+
20.15 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
22.10 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
23.10 «Большинство»
0.20 «Пасечник. Послесловие» 16+
1.20 «Место встречи» 16+
2.20 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 12 шăматкун

### 1 КАНАЛ
6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
6.10 Х/ф «ПРЕДВАРИТЕЛЬНОЕ РАССЛЕДОВАНИЕ» 16+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Владимир Гостюхин. «Она его за муки полюбила...» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.15 «Теория заговора» 16+
14.15, 15.15 «ДОстояние РЕспублики: Александр Зацепин» 16+
16.25 К 90-летию Александра Зацепина. «Мне уже не страшно...» 12+
17.30 Чемпионат мира по биатлону. Эстафета. Мужчины. Прямой эфир из Норвегии. По окончании - Новости
19.15 Х/ф «ЛЮБИТ НЕ ЛЮБИТ» 16+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Подмосковные вечера» 16+
23.55 Т/с «ВЕРСАЛЬ» 18+
2.00 Х/ф «ХОФФА» 16+
4.35 «Модный приговор»

### РОССИЯ 1
4.30 Х/ф «СЛЕДСТВИЕ ВЕДУТ ЗНАТОКИ» «ОН ГДЕ-ТО ЗДЕСЬ» 16+
6.15 «Сельское утро»
6.45 Диалоги о животных
7.40, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10 Россия. Местное время 12+
9.15 «Правила движения» 12+
10.10 «Личное. Анастасия Волочкова» 12+
11.20 Х/ф «КОГДА ЦВЕТЕТ СИРЕНЬ» 12+
13.15, 14.30 Х/ф «ЖИЗНЬ РАССУДИТ» 12+
17.00 «Один в один. Битва сезонов» 12+
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «СТАРШАЯ ЖЕНА» 12+
1.00 Х/ф «РАЙСКИЙ УГОЛОК» 12+
3.00 Т/с «МАРШ ТУРЕЦКОГО» 12+
4.25 Комната смеха

### ЧТВ
**7.40-8.00 Вести-Чăваш ен**
**8.10-9.15 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.05 «Хорошо там, где мы есть!» 0+
5.35, 23.55 Т/с «УЧАСТКОВЫЙ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Жилищная лотерея Плюс» 0+
8.45 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
9.20 Кулинарный поединок с Дмитрием Назаровым 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Еда живая и мертвая» Научно-популярный цикл Сергея Малоземова 12+
11.55 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею» 16+
14.20 «Поедем, поедим!» 0+
15.10 Своя игра 0+
16.20 Т/с «КОДЕКС ЧЕСТИ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 Х/ф «МУЖ ПО ВЫЗОВУ» 16+
1.50 Дикий мир 0+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕçерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 13 вырсарникун

### 1 КАНАЛ
5.35, 6.10 Х/ф «БАРХАНОВ И ЕГО ТЕЛОХРАНИТЕЛЬ» 12+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Открытие Китая»
10.50 «Непутевые заметки» 12+
11.10 «Пока все дома»
12.20 «Фазенда»
12.55 «Гости по воскресеньям»
13.50 «Ирина Алферова. «С тобой и без тебя...» 12+
15.00 Чемпионат мира по биатлону. Масс-старт. Женщины. Прямой эфир из Норвегии
15.45 «Черно-белое» 16+
16.50, 18.10 «Голос. Дети»
18.50 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
21.00 Воскресное «Время»
23.00 Т/с «САРАНЧА» 18+
1.00 Х/ф «ОН УШЕЛ В ВОСКРЕСЕНЬЕ» 16+
2.50 Х/ф «СКУДДА-У! СКУДДА-ЭЙ!» 16+

### РОССИЯ 1
5.00 Х/ф «СЛЕДСТВИЕ ВЕДУТ ЗНАТОКИ» «ОН ГДЕ-ТО ЗДЕСЬ» 16+
7.00 Мульт утро
7.30 «Сам себе режиссер»
8.20, 3.25 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
13.05, 14.20 Х/ф «БРАТСКИЕ УЗЫ» 12+
17.30 «Танцы со Звездами» Сезон - 2016
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
2.30 «Вечный человек, или Повесть Туринской Плащаницы»
3.55 Комната смеха

### ЧТВ
10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ
5.05, 23.55 Т/с «УЧАСТКОВЫЙ» 16+
7.00 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.55 «Дачный ответ» 0+
13.20 «НашПотребНадзор» Не дай себя обмануть! 16+
14.20 «Поедем, поедим!» 0+
15.10 Своя игра 0+
16.20 Х/ф «Я ШАГАЮ ПО МОСКВЕ» 12+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Акценты недели»
20.00 Х/ф «КРИМИНАЛЬНОЕ НАСЛЕДСТВО» 16+
1.40 «Наш космос» 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30 «Comedy Club. Exclusive» 16+
8.00, 8.30 «ТНТ. MIX» 16+
9.00, 9.30 Т/с «САШАТАНЯ» 16+
10.00 «Дом-2. Lite» 16+
11.00 «Перезагрузка» 16+
12.00 «Подставь, если смо-

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Асамлă кино тĕнчи**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри – мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен**

## Кулăш

«Эльдорадо» лавкка мартăн 8-мĕш ячĕпе акци ирттерет! Килте усă курмалли техника – 2 – пĕрре хакĕпе. Хĕрарăмсене шухăшламалăх. Сире мăшăр электрочейник парнелерĕ пулсан тепри камра-ши?

* * *

Арăмĕ ирхине тутлăн карăнса:

– Епле ырă тĕлĕк куртăм! Эсĕ мана уяв ячĕпе бриллиантлă çĕрĕ парнелерĕн! Мĕне пĕлтерет-ши?

– Тăхта. Кĕçех пĕлетĕн.

Упăшки лавккана тухса каять. Унтан илемлĕ хăюпа çыхнă курупкапа таврăнать, арăмне тыттарать. Лешĕ пăлханса парнене уçать. Унта – «Тĕлĕк мĕне пĕлтерет» кĕнеке.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Изготовление в короткие сроки.
Гарантия качества
Скидки до 30 %
Тел. 89176594701.



120.**Теплицы из поликарбоната** 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. Пенсионерам скидки. Т. 36-06-16,48-08-23.

## П У Л Ă Ш У / У С Л У Г И

36.**Олег Боголюбов – маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. Т. 8-906-380-86-28.**

38.**Чистка колодцев, скважин. Навесы.** Т. 8-967-471-50-70.

45.**Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8/8352/ 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

46.**Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur21.ru. Т. 89053434207.

51.**Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

55.**КАМАЗ-манипулятор** /автовышка/ 10 тн., кран 6 тн., 16 м; **продажа** кирпичей, керамблоков, фундаментных бл-в, цемента, ж/б колец; **бурение.** Т. 89033795258.

57.**Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

64.**Сухая чистка, изготовление и переделка** подушек, перин, пуховых одеял и матрацев /с простегиванием вдоль и квадратиками, любых форм и размеров/. Работы выполняются около дома заказчика. Выезд в любой нас. пункт – бесплатно. Т.: 89279904724, 89279904725.

66.**Грузоперевозки** – КАМАЗ с манипулятором 3 тн., г/п 17 тн., длина 12 м. Т. 8-903-322-80-78.

70.**Установка сантехники, электрики.** Т. 8-937-397-24-42.

77.**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

84.**Психотерапия** зависимостей: **алкогольной, табачной, игровой** с 9 час. до 18 час., в сб. до 13 час. А.: Чеб-ры, Энгельса, 2. Т. 62-11-84. *Лиц. 2101001044 МЗЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

87.Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

125.**Бурение скважин на воду.** Т. 8-906-381-60-37.

152.**Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

617.**Бурение колодцев, скважин.** Т.: 8-967-470-38-24, 8-927-990-54-81.

## Т У Я Н А Т Ă П / К У П Л Ю

18.**Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

28.**Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

50.**Коров, тёлок.** Т. 8-927-850-85-64.

79.**Шкуры КРС** – дорого. Т. 8-917-66-04-47, 8-987-126-02-23.

96.**КРС** – коров, бычков; свиноматок. **Дорого.** Т. 89061327604.

108.**Коров, тёлок.** Т. 89370144997.

128.**Прицеп** б/у на легковой автомобиль. Т. 89196690171.

132.**Рога лося, оленя** – 300 руб./кг. Т. 8-960-306-18-44.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш сурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## Саламлатпăр



*Красноармейски районĕнчи Пулайкасси ялĕнче пурăнакан* ***<u>Лидия Ефимовна ЕФИМОВĂНА</u>*** *пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей, ăнăçу сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланса пычăр, ял хушшинчи хисепӳ ан иксĕлтĕр, кĕрекӳ тăвансемпе тус-юлташсенчен ан татăлтăр. Çывхарса килекен Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе унăн йăмăкне* ***<u>Елизавета Ефимовна ГУСАРОВĂНА</u>*** *та саламлатпăр. Пире савăнтарса тата нумай çул пурăнăр.*

***<u>Хисеплесе хĕрĕсем, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.</u>***

* * *



*Çĕр çинчи пирĕн чи хаклă çыннăмăра – Красноармейски районĕнчи Сурăмхĕрри Карай ялĕнче пурăнакан* ***<u>Евдокия Ефимовна ПЕТРОВĂНА</u>*** *– 90 çулхи юбилейпе ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана, ытарайми, юратнă аннемĕр, пире пурнăç парнеленĕшĕн, ачаран савса ĕçе вĕрентсе ӳстернĕшĕн. Вăрăм та пархатарлă кун-çул, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.*

***<u>Ывăлĕсем, кинĕсем, хĕрĕсем, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем.</u>***

## С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

1.**Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.
**Сайт:** www.ex-comfort.ru.

2.**АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Работаем без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

3.**АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

4.**Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

5.**БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. **Т. 8-960-301-63-74.**

6.**Косилки, грабли,** фрезы, опрыскиватели, **картофелесажалки,** доильные аппараты. Доставка! **Т. 8-937-375-80-95.**

7.**ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-927-668-97-13.

8.**Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит**. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.**ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Дешево. Т. 89033583021.

10.**Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.**Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

12.**Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

13.**ОПГС,** песок, щебень, **керамзит,** кирп. бой. Т. 89033225766.

14.**Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

15.**Кирпич,** БЛОКИ. **Т. 8-961-339-33-63.**

16.**Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

21.**Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

22.**СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – около 100 видов, **СЕТКУ СВАРНУЮ,** кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

24.**ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

26.**КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

27.**КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т. 8-903-322-02-08.

29.**Плуги,** окучники, **пресс-подборщики,** шпагат. Доставка! **Т. 8-927-851-68-58.**

30.**ОТРУБИ,** пшеницу, **ячмень,** овес, **к/корм.** Т. 8-937-391-60-16.

31.**Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

33.**Навесные грабли-ворошилки,** косилки, **сажалки,** опрыскиватели, плуги. Оптовые цены. Т. 8-937-388-50-89.

35.Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

40.**ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

42.**Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

47.**ОКНА** Чувашии, **ДВЕРИ** железные, межкомнатные. **Т. 89050281182.**

54.**ПРОФНАСТИЛ оцинкованный заборный.** Цена за лист **360** рублей. Т. 8-965-681-27-73.

61.**ЗАБОРЫ и т.д.** Т. 89877372939.

68.**Керамблок** 20х20х40, 12х20х40, 09х20х40; **гравмассу,** песок, керамзит, **колодезные кольца.** Т. 8-903-322-68-46.

76.**Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

93.**Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

104.**Теплицы по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

106.**Кольца колодезные, канализационные.** Скидки. Доставка. Т. 8-927-841-62-47.

110.**СЕНО люцерны тюкованное** – 1 кг 9 руб. Т. 89603012705.

111.**Месячных БЫЧКОВ** по 8000 руб. Доставка. Т.: 8-917-664-17-16, 8-919-669-01-71.

113.**Бетон, песок, гравмассу, кирпич** – недорого. Пенсионерам – скидки. Д-ка. Т. 89613400295.

114.**От производителя** блоки кермзитобетонные пропаренные, вибропрессованные /20х20х40/ – 31 руб., **кольца** ж/б, песок, цемент, керамзит в мешках и россыпью. Т.: 212175, 89196678795.

124.**БОЧКИ 200 л.** Т. 89613429059.

127.**Комнату** в г. Новочебоксарск по материнскому капиталу. Тел. 8-987-674-40-92.

129.**ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Доставка. Скидки. Т. 89276676292.

130.**Теплицы из поликарбоната** от 13700 руб. Т. 89051992331.

727.**Керамзитобетонные БЛОКИ** 20х20х40, 12х20х40, пропаренные. Доставка манипулятором. Т.: 89050284130, 89033462293.

828.**Блоки КБ** от 30 руб., **доски** обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **щебень.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ ХЫПАР ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 56-15-30, 56-00-67.
<u>коммерци дирекцийĕ:</u> 28-83-70, 56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта: hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

02.03.2016. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.

Тираж 15057. Заказ 708.